Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе для муниципального тура республиканской олимпиады школьников общеобразовательных организаций с изучением чувашского языка 2017-2018 учебный год. 9 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 120 минут

Текста вулăр, хушнă ĕçсене тăвăр.

(1)Хура кураксем вĕçсе килчĕç – шыв кӳлленчĕкĕсем йăлтăртатма тытăнчĕç, кайăк кăвакалсем çитсе ӳкрĕç – çырмасенче пĕрремĕш шыв куçĕсем курăнса кайрĕç, пăрчăкансем чупкалама тытăнчĕç – çырмари пăрсем çурăлчĕç. (2)Куккук авăтни илтĕнчĕ – вăрман симĕс тĕтĕм пĕркенчĕ, вĕлтрен тăрри юрласа ячĕ – вăрман хĕррисенче ешĕл курăк тапса тухрĕ.

(3)Е тата: сар кайăксем вĕçсе килчĕç – чечексем шăтса тухрĕç, шăпчăк юрлама тытăнчĕ – çĕмĕрт çеçки çурăлчĕ.

(4)Çуркунне яланах çапла пулать: кашнийĕ хăйĕн ĕçне пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тăвать.

Ĕçсем

1. Текстран кайăк ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр. Чăваш чĕлхинче ухмах çынна, Европа чĕлхисенче ăслă çынна палăртакан кайăк ятне çырăр, вырăсла куçарăр.

2. *Куç* сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕсене сахалтан та пилĕк тĕслĕхпе çырса парăр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран евĕрлев сăмахĕнчен (звукоподражательное слово) пулнă глагола (глаголсене) çырса илĕр, вырăсла куçарăр. 3 евĕрлев сăмахĕ аса илĕр те вĕсемпе предложени çырăр.

4. 3-мĕш предложенири *ешĕл* сăмаха мĕнле ăнланатăр? Вырăсла мĕнле куçарма пулать? *Ешĕл* сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшне палăртăр, вырăсла куçарăр.

5. Ĕçе тăвайманнине палăртас тесен (для выражения невозможности действия) *пыратăп* глагола мĕнле çырмалла?

6. Тупсăмне тупăр.

Уçă сасă манăн пулсан тăпра ăшĕнче пуранакан чĕр чун пулатăп, уçă сасă санăн пулсан çунат сарса çӳлтек вĕçетĕп.

7. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, ...
Ĕçрен ан хăра, ...
Пăсасси çăмăл та, ...
Шикли шикленнĕ , ...
Вăрман леш енчи курăнать, ...

8. Вырăсларан чăвашла куçарăр.

Холодная зима проходит. Наступает весна. Дни становятся длиннее, ночи – короче. Погода становится теплее. Птицы прилетают с юга.

9. Чăваш халăх юррисенче йăмра мĕне (кама) пĕлтерет? Тĕслĕхпе ĕнентерĕр.

10. *Экологи* сăмахпа синквейн çырăр.